# Хăрнă вĕрене

Ку ĕç пулса иртнĕренпе чылай çул хыçа юлчĕ. Анчах та ăна ялта паянхи кун та астăваççĕ. Ламран лама куçса пычĕ çак сăмах. Пĕрремĕш хут илтекенсене сивĕ шывпа сапнăнах, сив чир пек чĕтретрĕ.

Наташа çемьере улттăмĕш хĕрача. Пĕчĕк чухне савăнмалли те, хурланмалли те пайтах тупăнать. Акă паян вал шкулпа, пĕрле вĕреннĕ юлташĕсемпе сывпуллашать. Юлашки шăнкăрав! Камăн асĕнче юлманши вăл? Хумхану: ачалăх —хыçра, умра — пуласлăх, пĕлменлĕх, çĕнĕлĕх. Мĕн тери илемлĕ пурнăç!

Наташа, — чĕнчĕ ăна вунă çул пĕр парта хушшинче ларнă Люда, — ачасем пурте шуçăм кĕтсе илме каятпăр теççĕ. Эпир те каяр-и?

Каятпăр, Люда. Эпир текех пĕчĕк мар, çавăнпа ачасем тесе ан кала, хĕрсемпе яшсем эпир.

Людăпа Наташа алран алă тытăнса ушкăн хыççăн утрĕç. Хĕрсен сывпуллашу каçĕ валли ятарласа çĕлеттернĕ кеписем çилпе вĕлкĕшеççĕ, катаран курăнаççĕ. Яшсем пĕр-пĕрне тĕрткелесе шавлăн калаçса утаççĕ.

Рита, кăлар сумкăра мĕн пуррине, — хушрĕ Коля пысăк сумкине çĕре лартса. — Кĕçех тул çутăлать, пирĕн вара нимĕн те хатĕр мар.

Ан васка, васкакан арăмĕнчен савăнман тет, — тĕртсе илчĕ ăна Рита.

Çапла шӳтлекелесе, ахăркаласа хĕрсем курăк çине çитти сарчĕç, апат-çимĕç хатĕрлерĕç. Яшсем эрех кăларчĕç. Халиччен эрех тутине пĕлмен хĕрсем кăна сивлерĕç пулин те каччăсем çине тăнипе шăпланчĕç.

Наташа, эс пирĕн класс старости, çавăнпа сана сăмах паратпăр.

Наташа вăтаннипе хĕрелсе кайрĕ. Унтан хăй çине пăхакан куççене асăрхаса калаçма пуçларĕ.

- Халиччен кун пек уявсенче пулса курман та сăмахне те калама пĕлместĕп, — турткаланчĕ вăл.

- Эс ăшра мĕн пуррине кала, — хистерĕç ăна.

- Юрĕ эппин, — хăйне алла илчĕ Наташа. — Паян эпир сирĕнпе ачалăхпа сывпуллашатпăр, савăнатпăр. Малашлăх пире пурне те илĕртет. Пурнăç яланах савăк пулассăн туйăнать. Çапла пултăр та. Эпĕ сире пурне те хăвăр çулăра шыраса тупма, телейлĕ пулма сунатăп. Шкулта пĕрле вĕреннĕ юлташсене манас марччĕ. Кирек ăçта кайсан та çыру çӳретбр.

- Тĕрĕс, Наташа, — алă çупрĕç итлесе ларакансем. — Атьăр пĕр-пĕрне манмастпăр тесе тупа тăватпăр.

Чылайччен шавларĕç çамрăксем. Кăвак шуçăмччен лăпланмарĕ улăх. Ирхине çеç киле кĕрсе выртнă Наташăн ыйхи килмерĕ. Иртнĕ каçа, унăн кашни самантне аса илчĕ.

Акă юнашар парта хушшинче ларнă Лева ун çине куç сиктермесĕр пăхать. Ыттисем курман чухне ун аллисене ачашласа илет. Халиччен ун пеккине сисмен Наташа шал- тах тĕлĕнчĕ. Каччă йăлăхтарса çитерсен ун çине сиввĕн пăхрĕ, аллине сирчĕ. Çынпа калаçма та именекен Лева сасартăк пуçне пĕкрĕ. Наташа çине тунсăхлăн пăхса илчĕ: «Каçар, Наташа, эп сана виç çул юратса пурăнатăп, анчах эс ăна сисмерĕн. Паян эрех пуçа минретрĕ пулас, каçар», — тесе айккинелле пăрăнчĕ.

Лева ушкăнран пăрахса кайсан Наташа савăнчĕ. Çапла-çке вăл, хăв юратман çыннăн асапĕ куçа курăнмасть, унран тăрăхлатăн çеç.

«Унтан... унтан мĕн пулнăччĕ-ха? — асаилӳ çăмхине малалла сӳтрĕ хĕр. — А-а Костя...»

- Салам яш-кĕрĕме, — тесе аслăрах яшсен ушкăнĕ вĕсем патне çитрĕ. — Мĕн ĕçетĕр? О-о, ликер, шур эрех те пур. Да-а, çитĕнтĕр çав эсир.

Костя Наташа патне утса пычĕ, ăна çупăрласа çамкинчен чуптурĕ. «Кĕçĕр тĕл пулатпăр-и?» — пăшăлтатрĕ каччăн тути. Ун вĕри сывлăшĕ хĕр пуçне минретрĕ. Ытла та ачашшăн, çепĕççĕн илтĕнчĕç ун

сăмахĕсем. «Ахă», — терĕ те вăл шăппăн ушкăнран уйрăлчĕ. «Костя... Костенька, — пăшăлтатрĕ вăл, — мĕн тери юрататăп эп сана, ман сансăр пурнăç çук... »

Наташа майĕпен ялалла утрĕ. Туйрĕ вăл: Костя хĕр ăçталла утнине сăнасах тăрать. Эппин, кĕçех хăваласа çитме кирлĕ. Çĕрĕпе алла-аллăн тытăнса утĕç вĕсем. Чĕрере мĕн пуррине йăлтах калĕ ăна паян Наташа. Ун чĕри ыррăн тапрĕ.

«Хĕр вăл тармĕ, эрех пĕтме пултарать», — шухăшларĕ Костя çурри таран пушанма ĕлкĕрнĕ кĕленчесем çине пăхса. Наташа хыççăн чупма васкамарĕ.

Яшсем, ярăр-ха пĕрер черкке эрех эсир шкул пĕтерсе çар ретне тăрас ятпа. Эпир те сирĕн пекех айван пулнă.

Черкке хыççăн черкке ĕçрĕ нумай пулмасть çартан таврăннă Костя. Унтан тайăлкаласа Наташа кайнă еннелле утрĕ.

Наташа хăйсен килĕ тĕлĕнче ӳсекен вĕрене çумĕнчи сак çине ларчĕ. Çамрăк вĕрене çулçисем ăна çӳçрен ачашлаççĕ, ирхи çилпе сулкалашса хĕре питрен кăтăклаççĕ. «Кам лартнă-ши çак вĕренене? — шухăшларĕ Наташа. — Хăех шăтнă ĕнтĕ. Çавăн пек йывăç-çке вăл: вăрри таçтан çилпе вĕçсе килсе ӳкет те шăтать, ӳсет вара».

— Мана кĕтетĕн-и? — шухăшне татрĕ Костя сасси.

—Ларап ыйхă килменрен.

- Мĕншĕн салху? Санăн паян савăнмалла. Эс пур, пуçна усатăн. Наташа, шăнтать мана. Пӳртрен мĕн те пулин илсе тух-ха ăшăнма.

Хĕр ашшĕ-амăшне вăратасран шикленсе пӳрте шăппăн кĕрсе тухрĕ.

- Ме тăхăн.

- Наташа, пĕлетĕн-и, эп сана питĕ юрататăп. Ялан сан çинчен шухăшланипе пуç ыратса çӳрет, — хĕре ыталама пăхать Костя. — Эсб те мана килĕштеретĕн, çапла-и?

Наташа халиччен кун пирки чуна уçса калаçса курманран пуçне

пĕкет.

- Юрататăн, эп пĕлетĕп. Санăн куçусем калаççĕ мана ун пирки. Эппин, мĕншĕн вăраха ямалла? Эс ĕнтĕ çитĕннĕ хĕр. Пул ман арăм.

- М... мĕн?! — сасартăк çухалса кайрĕ Наташа. — Качча тухма иртерех-ха мана.

- Ухмах, кам качча тухасси пирки калаçать-ха кунта? Эпб сана арлă-арăмлă пуласси çинчен каларăм.

- Мĕнле? Пĕрлешмесĕрех-и? — хăранипе чĕтреме пуçларĕ Наташа.

- Мĕн пулать вара уншăн? Халĕ чылайăшĕ çапла пурăнать. Юрататпăр-çке эпир пĕр-пĕрне. Э-э, сан урăххи пур пулĕ-çке. Илтрĕм-ха эп Лева сан çума çыпăçни çинчен.

- Костя, мĕн калаçан? Лева ача-ха вăл. Çӳллĕшĕпе те пĕчĕк манран. Эп... сана килĕштеретĕп.

- Эпĕ те, Наташа, эпĕ те.

Костя хĕре ыталаса чуптума пуçларĕ. Наташăн пуçне те эрех, те юрату сĕрĕмĕ анратрĕ. Кăна вал хăй те ăнланса илеймерĕ.

...Наташа минтерĕ йĕп-йĕпе.  Куççульне шăлма шутламарĕ вăл. Паян хĕр ĕмĕрĕн юлашки каçĕ. Пăрахмĕ-ши ăна кун хыççăн Костя?

- Наташа, тăр хăвăртрах, касу хăваламалла. Эс халь те çывăран мар-и? — хĕрне пырса силлерĕ Марье аппа.

Хĕрĕ çĕрĕпе куç хупманнине тата ирхи вăрттăнлăх пирки пĕлсен мĕн тунă пулĕччĕ-ши Марье аппа? Ахаль те харсăрскер, çӳçрен турта-турта хĕнетчĕ ĕнтĕ.

...Кун хыççăн кун иртрĕ. Наташăпа Костя çывăхланнăçемĕн çывăхланса пычĕç. Наташа каç пуласса чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Ĕçсене пуçтарсанах вĕрене айне Костьăна кĕтме тухса ларчĕ. Юратăвĕ пысăклансах, ӳссех пычĕ вĕсен. Костя калакан ачаш сăмахсем хĕр чĕрине ыррăн ыраттарчĕç. Хăйĕн юратăвĕ çинчен кама та пулин каласа пĕрле савăнас килчĕ. Анчах ăна Костя хăйсем çинчен никама та каласа

пама хушманни лăплантарчĕ. Пĕр вĕрене çеç, çилпе вĕçсе килсе шăтнă вĕрене, хĕр вăрттăнлăхне пĕлсе тăчĕ, унпа пĕрле савăннăн, ешернĕçемĕн ешерсе пычĕ, çӳлелле кармашрĕ.

Икĕ чун пĕр-пĕрне юратсан виççĕмĕшне чун кĕрет. Наташăран та пăрăнмарĕ çак ăраскал. Пĕррехинче, улăха утă пуçтарма кайсан, Наташа пуçĕ çаврăннине, ăшĕ йĕкленнине туйрĕ. Вăйсăрланса çĕр çине ларчĕ.

- Мĕн пулчĕ, хĕрĕм, тем ыратать-им? — амăшĕ чупса пырса ыталарĕ хĕрне.

Тем, пуç çаврăнать, анне.

— Хĕвел çинче нумай çӳренĕрен пулĕ. Пыр, кайса выртах.

Анчах тепбр кун та, эрнерен те иртмерĕ пуç çаврăнни.

Ирсерен ăшĕ йĕкленнипе сарайне вăрттăн тухса хăсрĕ.

- Итле-ха, Наташ, — чарчĕ ăна пĕррехинче аслăк айĕнчен тухнă чухне хуларан курма килнĕ аппăшĕ, — эс йывăр çын мар-и?

Ку кĕтмен ыйту пулнипе Наташа пĕр самант нимĕн калама аптăраса тăчĕ. Унтан шăппăн: «Пĕлместĕп», — терĕ.

- Ыранах манпа хулана пыратăн. Палланă тухтăр патне илсе каятăп. Килтисене халех ан шарла.

...Наташăн ача пулать. Савăнмалла-ши куншăн е хурланмалла? Зоя аппăшĕ кун çинчен пĕлсен ăна намăслантарса пĕтерчĕ. «Пирĕн ратра хĕр пуççăн ача тăвакан пулман, намăссăр. Аттепе анне пĕлсен пуçна çиеç вĕт?! »

Аттепе анне... Калама кирлех-ши вĕсене? Атте, ахаль те аллине ирĕке яраканскер, хĕнесе тăкĕ. Ашшĕ камне тĕпчĕ. Костьăпа хирĕçĕ. Вăл та манран сивĕнĕ. Юрататăп тетчĕ. Ку чăнах та çапла пулсан — пĕрлешĕпĕр.

Çакăн пек шухăшпа таврăнчĕ Наташа тăван яла. Каç пуласса чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Савнине савăнăçне пĕлтерме васкарĕ.

- Эс мĕскер, ухмаха тухрăн-им? Ман халех ачапа çыхланса ларас килмест, — пулчĕ Костя хуравĕ.

- Пĕр-пĕрне юрататпăр-çке, пĕрле пурăнасси çинчен те калаçаттăн, — тусĕ шӳтлет пуле тесе ăна куçран пăхрĕ Наташа.

- Çапла, юрататăп. Анчах ачана мар, сана! Чăннипех калатăн пулсан парах эс вал ачана. Эпир çамрăк-ха, ачи татах та пулĕ. Кайран каллех сан пата килĕп.

Наташа Костя пăрăнса утнă хыççăн ура вăйĕ пĕтнипе сак çине лаках ларчĕ. Куçĕсенче куççуль пĕрчисем шăрçаланчĕç. «Акă пĕтрĕ ман юратăвăм. Пурнăçăм сӳнчĕ, — чунтан хурланса ĕсĕклерĕ вăл. Унтан хырăмĕнче тем йăшăлтатнăн, хăй пуррине систернĕн туйăнчĕ. — Костя ачи. Хăтăлмалла унран. Епле пулсан та хăтăлмалла».

Наташа тепĕр кунне ирех хулана тухса кайрĕ. Аппăшĕпе паллană тухтăр патĕнче тепре пулчĕç вĕсем. Анчах Наташăн ачи ӳссе кайнă-мĕн. Унран хăтăлас тесен иртерех килмелле пулнă терĕ. Зоя аппăшĕ Наташăна чăлхапа трикотаж фабрикине ĕçлеме вырнаçтарчĕ. Общежитире пĕр пӳлĕмре вырăн та тупăнчĕ ăна валли.

- Наташа, эс пирĕн пата урăх килсе ан çӳре-ха, — терĕ ăна пĕррехинче аппăшĕ ĕçрен тухасса кĕтсе илсе. — Коля пĕлсен пĕтерет мана. Эп сана ĕçе вырнаçтартăм, пурăнмалли те пур. Яла та кайса ан çӳре,намăс.

Пĕчченех тӳсрĕ Наташа асапне. Йывăр пулсан та ĕçе çӳрерĕ. Укçине перекетлесе пырса ача япалисем туянчĕ. Сисмесĕрех çуратма вăхăт çитрĕ.

Юнашар выртакан ывăлĕ çине чылайччен пăхса выртрĕ вăл. Каснă-лартнă Костя. Куç харшисем те унăнни пекех. Хуп-хура куçĕсем сиввĕн пăхнăн туйăнаççĕ. Палатăри ытти хĕрарăмсем патне упăшкисем килсе çӳреççĕ пулсан, Наташа патне вунă кун хушшинче никам та пымарĕ. Ачине те пӳлĕмре пĕрле пурăннă хĕрсем илсе тухма пулăшрĕç. Пуçланчĕ вара хăйĕн айванлăхне пула вăхăтсăр амăшĕ пулса тăнă хĕрарăм нуши. Общежити коменданчĕ, качча кайман ватă хĕр, ача сассине тӳсме пултараймасть иккен. Хĕрсем те сменăпа ĕçлеççĕ.

Çывăрса тăранайманран вĕсене ĕçре йывăр иккен, чăркăшланма пуçларĕç. Зоя аппăшĕ те пачах та пымарĕ. Упăшкинчен вăрттăн пĕр хутчен укçа пырса панă хыççăн çухалчĕ. Ялан йĕнипе Наташăн сĕчĕ те анми пулчĕ.

- Зоя, каятăп эп яла анне патне. Каçараççех вĕсем мана. Хĕр пуççăн ача тăвакан эпĕ çеç-им? — терĕ пĕррехинче Наташа аппăшне ĕçрен кĕтсе илсе.

— Ан хăйнă пул! — касса татрĕ лешĕ. — Лидăпа Зина пулчĕç иртнĕ эрнере. Сан пата килесшĕнччĕ те — Атăл леш енне юлташĕсемпе канма кайнă тесе суйрăм. Яла ахаль те сас-хура çитнĕ тет. Анне вĕсене пĕлсе килме хушса янă. Чăнах та ача тунă пулсан киле килсе ан кĕтĕр тесе каларĕ тет атте. Костьăн амăшĕ те ачине хулара тупнă та ман ывăла унпа тăлласшăн тесе калаçса çӳрет тет. Кам хушнă сана вунçиччĕре арăм пулма?!

- Юратнă-çке эп ăна, аппа. Шаннă. Пĕрлешесси пирки калаçатчĕ. Шан хальхи арçынсене. Хăйсене кирлĕ чухне анчах эпир вĕсемшĕн хаклă. Мĕн кирлине илеççĕ те кайран пирĕн çине сураççĕ. Пуçпа шухăшламалла пулнă кăштах. Атя-ха ачасен çуртне кайса пăхар, тен, унта йышăнĕç. Ачасăр мăшăрсем нумай вĕт халь.

Анчах унта та ĕç ăнмарĕ вĕсен. Ачан ашшĕ те, амăшĕ те сыввине пĕлсен темĕн те пĕр каласа пĕтерчĕç. Заведующи хĕремесленсех вĕсем çине кăшкăрма пуçларĕ.

- Мĕнле намăс мар сире? Савăшса йăпанатăр та ачана кăларса перетер! Тепĕр çулталăкран тата тепре илсе килетĕр! Çуратрăн пулсан пăх!

Наташăпа Зоя Димăна (çапла ят пачĕç пепкене) йăтса общежитине кĕнĕччĕ çеç — вĕсене комендант тĕл пулчĕ.

- А-а, эсир Беловăн тăванĕ пулĕ-ха? Илсе кайăр ăна кунтан. Ачи макăрни хĕрсене çывăрма памасть. Белова халь пирĕн фабрикăра ĕçлемест. Малашне те ĕçлеттерĕç-ха ăна. Паянах пушатăр пӳлĕме.

Çĕнĕрен килнĕ çынсем валли вырăн кирлĕ пире.

- Мĕн тăвас-ши? — ачине хăй çумне пăчăртарĕ Наташа.

Ялах кайма тивет. Анчах киле мар, Костя патне. Каçхине, çынсем курман чух, вăрттăн. Калаç, йăпăлтат, кирек мĕн ту, анчах вĕсен килне пурăнма юл.

Наташа Канаша каякан пуйăс çинче хăйĕн иртнĕ кунĕсене аса илсе пычĕ. Ашшĕ-амăшĕ килĕнче пĕр хуйхăсăр irттернĕ ачалăхĕ куç умне тухрĕ. Хĕнени те, ятлани те пулнă пулĕ. Анчах, темшĕн-çке, пурăннăçемĕн çав самантсене кулса çеç аса илетĕн. Юлашки сывпуллашу каçĕ. Вунă çул пĕрле вĕреннĕ Лева куçран пăхать, хăй Наташăна юратни, унсăр пурăнма пултарайманни çинчен калать. Наташа унран шăллĕнчен тăрăхланă пек тăрăхлать. Костя... Хĕр чĕрине пĕрремĕш юрату çулне хывнă Костя... Асран тухми Костя. Наташăн куçĕсем шывланчĕç. Епле ирсĕр этем вăл. Ача пулассине пĕлсенех Наташăна пăрахрĕ. Питĕ хăвăрт сӳнчĕ ун юратăвĕ. Тен, сӳнмен? Вĕсем хирĕçсе кайнин айăпĕ те пулас ача пулчĕ. Эппин, вĕсене уйăраканĕ Наташа чĕрçиййĕ çинче лăпкă тĕлĕрекен ывăлĕ. Çамрăк хĕрарăм пурнăçне синкерлетекенĕ — Дима. Çак шурă костюм тăхăннă пепке пулмасан унран тăванĕсем те сивĕнес çук, паянхи кун та хĕрсемпе пĕрле савăнса пурăнмалла. Костя та сивĕнмен пулĕччĕ.

Наташа яла çитнĕ çĕре çутăсем çукпа пĕрехчĕ. Яла аппăшĕ каланă пек тĕттĕмре çитес тесе поезд çинчен ансан та хăвăрт утмарĕ вăл. Хăйсен килĕ умне çитсен ачана вĕрене умĕнчи сак çине хучĕ. Пĕтĕмпех паллана, чуна çывăх вырăнсем. Çак вĕрене айĕнче вĕсем Костьăпа пĕрремĕш хут чуптунă. Шкулпа сывпуллашнă каç пĕр-пĕрне юратни çинчен пĕлтернĕ. Çакăнта вăл хĕртен хĕрарăм пулнă. Юлашки хут та çакăнтах сывпуллашнă. Наташа вĕрене çумне тĕршĕнес тесе аллине малалла тăсрĕ. Анчах аллисем хăрнă вĕрене туратне перĕнсе ыратса кайрĕç. «Чим-ха, манăн вĕрене хăрнă вĕт? Вăл ман пекех çак çĕр çинче ытлашши, никама кирлĕ мар пулнă. Илемсĕр вĕрене! Ман пекех», —

йĕчĕ Наташа.

Ăçта каймалла? Ниçта та, никам та ăна кĕтмест. Костя патне кайса мĕскĕнленес çук Наташа. Эппин... пĕр çул. Вĕрене пек çамрăклах хăрасси çеç юлать.

Тепĕр кунне ял хĕрринчи вĕрене çинче çакăнса тăракан икĕ вилене курсан касу хăвалакан хĕрарăмсем шак хытса тăчĕç. Халиччен пулман ялта кун пекки.

Пĕтĕм ял пуçтарăнчĕ вĕсене пытарма. Пер шăтăка, пĕр тупăка вырттарчĕç вĕсене — амăшĕпе ывăлне. Дима пуçне амăшĕ кăкăрĕ еннелле тайнă. Вăл кĕç вăранса куçне уçассăн туйăнать, Наташăн сăнĕ вара кăн-кăвак. Пурнăçĕ те асаплă пулчĕ те — чунĕ те асапрах тухнă ĕнтĕ ун.

- Эх, Наташа, ма каламарăн-ши мана пĕрех хут, — илтĕнет тупăк умĕнче тăракан Марье аппа сасси. — Кĕçĕн хĕрĕм чи юратниччĕ.

- Мана та хăй çине алă хурасси çинчен нимĕн те каламарĕ, — амăшне йăпатрĕ Зоя. — Яла кайса килетĕп терĕ çеç. Кам пĕлнĕ-ха çапла пулса тухасса?

Костя Наташăпа Димăна пытарма пымарĕ. Ялтан тухса тарнă терĕç ун пирки. Миçе çул иртрĕ унтанпа — вăл ăçтине никам та пĕлмест. Пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл пурăннă кӳршĕсем ĕмĕр çураçайми тăшмансем пулса тăчĕç. Вĕренене те касса çунтарса ячĕç. Наташăна аса илтерекен пĕр япала та юлман ĕнтĕ ялта. Анчах ун ячĕ ламран лама куçса пычĕ. Ашшĕ-амăше хĕрне ăс панă чухне çеç ун ятне асăнчеç.

- Эх, мăнтарăн хĕрĕ, пурăнса та кураймарĕ, — Беловсен тĕлĕпе иртнĕ чух калаçрĕç касу хăвалакан хĕрарăмсем.

— Ма çав териех тăвăр пулнă-ши уншăн çут тĕнче?

*Эльмен, У. Хăрнă вĕрене: [калав] // Эльмен, У. Ма инçе-ши çăлтăрăм?... / У. Эльмен. – Шупашкар, 2001. – С. 200-206.*